ПАТАН [падáн] в загадке о *йăвăç варри* – сердцевине дерева. *Йăвăç патак патан уйăх хĕвеле курăнмаст.* Деревянная палка *патан* месяц не виден солнцу✍. *Собрание.* Описка? [Амш9:130].

ПАТИЛККА [пад’илк:á] в песне, которую поет жена *упăте* – обезьяны, возвращаясь из родительского дома к мужу, живущему под мостом. *Пат Патилкка, Патилкка, ман Патилкка мĕн тăват-ши? Пат Патилкка, Патилкка,* чем же занят мой *Патилкка?*✍ *Средние Тимерсяны* [Ашм9:130].

ПАТЛА: ПАТЛА СУПĂН [патлá сýбън] туалетное мыло? *Эпĕ паян тутартан патла супăн илсе юлтăм-ха.* Я сегодня у татарина купил *патла супăн*✍ [Ашм9:134].

ПАТРАКА [патрагá] 1. хрупкий, ломкий? 2. кора или мелкие ломкие веточки с почками? *Улма йăвăççи патраки çисе тутам катăк пулчĕ.* Грыз *патрака* яблони, и губы стали с вырезом✍. *Кĕвĕсем* [Ашм9:135].

ПАТРАШКАЛĂ [патрашкáлъ] с украшениями? *Патрашкалă кутлăх. Патрашкалă* шлея✍. *Старое Чекурское* [Ашм9:135].

ПАТША КАТАРНИ [патшá кадарни´ы] царские казармы? *Патша катарнисем пысăк тесе ахута каякань пĕри çук.* Зная, что *патша катарни* большие, никто с удовольствием не отправляется [в солдаты]. *Старое Дуваново* [Ашм9:138].

ПАТЬЕР[1]: ПАТЬЕР ПУШМАК [пат’jэ´р пушмáк] туфли [Ашм9:133].

ПĂНТАҪ [пъндáç] в загадке о *чĕлĕм* – курительной трубке. *Ман юлташăн пăнтаç.* У моего друга *пăнтаç*✍. *Альшеево.* › **пăнтĕç** [Ашм10:116, 117].

ПĂНТĔҪ [пъ´н’д’ьç] в загадке о *чĕлĕм* – курительной трубке. *Ман юлташăм пăнтĕç.* Мой друг *пăнтĕç*✍. *Старые Бурундуки.* › **пăнтаç** [Ашм10:117, 116].

ПĂРĂҪ ХĂМИ [пъ´ръç хъм’и´] крайний брус нар? *Письмянка* [Ашм10:137].

ПĂРҪАВАЛ [пърʒавáл] [Ашм10:141].

ПĂРТ[2]: ПĂРТ ЙЫВĂҪҪИ [пъ´рт jы[и]вăç:и´] длинная палка для закручивания пришвы у ткацкого станка. < *пир* холст + *туйи* посох + *йывăççи* дерево – притужальник. *Пăрт йывăççи (хивсене чараканни).* Притужальник (останавливающий пришвицу)✍. *Юркин. Пăрт йывăççи – хивсене чикекен патак.* Притужальник – палка, вставляемая в пришвицу✍. *СПВВ. Пăрт йăвăççи – тĕртнĕ чух хирсе хуракан туя.* Притужальник –

палка, которой поддевают во время ткацкой работы✍. *Новые Кармалы. Пăрт йăвăççи – пӳрт йӳççи* (у станка). › **пăртуççи** притужальник [Ашм10:142, 173].

ПĂСТĂШ-ТĂВАШ [пъстъш◡тъвáш] то же, что **пăстăш** порча? [Ашм10:151].

ПĂÇĂККА[2] [пъʒък:á] лечение изжоги? [Ашм10:151].

ПĂТ ТĂВА [пъ́т тъвá] то же, что **шăп тула** как раз наружу?✍ *Пăт тăва тухса тартăм эпĕ пӳрте вут хыпса илеччин. Пăт тăва* выбежал я из дома, пока огонь не охватил его✍ [Ашм10:154].

ПĂТĂЛ: ПĂТĂЛ-ПАТĂЛ [пъдъл◡бáдъл] подражание падению от удара. *Холха чиккинчен пĕре анчах патăм, пăтăл-патăл çĕре персе анч те ним пĕлмесĕр пĕр сахат ытла выртрĕ.* Дал по ушам один раз, упал на землю и без сознания пролежал больше часа✍. *Якейкино* [Ашм10:156].

ПĂТĂС: ПĂТĂС-ПАТĂС [пъдъс◡пáдъс] значение слова неотчетливое. 1. о мочале: с пятнами; быстро рвущийся. *Çĕрĕк, чĕрĕ, пăтăс-патăс, туратлă мунчаласене ăсатаççĕ.* Сырое, гнилое, пятнистое и сучковатое мочало спроваживают. *Канаш.* Ср.: *пăт-пăт, пăтă-пăтă* с крапинками; *пăт-пăт хĕрлĕ* красный с крапинками; *пăтă-пăтă хора* черный с крапинками. 2. плохонький, жиденький. 3. **пăтăс-пăтăс** с пятными; рвущийся, гнилой? [Ашм10:158].

ПĂХА [пъγá] смотритель, наблюдатель, наблюдающий. **ял пăхи** название божества, смотритель деревни? *Прокопьев.* **масар пăхи** то же, что **масар пуçĕ** человек, первым похороненный на клабдище [Ашм10:175; Ашм8:205].

ПĂШКАН [пъшкáн] 1. толочься. 2. шелушиться*? Кантăр çӳппи пăрластăк тӳсессĕн пăшканат, пĕтет.* Мусор от конопли после некоторого времени толчения *пăшканат,* заканчивается✍. *Малое Карачкино* [Ашм10:184].

ПЕЛЕТ [п’эл’э́т’]. *Çын сăра-мĕн тунă чухне усалсем халĕ те хăмла ытларах яринччĕ, ытларах яринччĕ тесе илĕртсех çӳреççĕ тет. Пирĕштисем вара хăмла ярсан пелет! пелет! тесе çынна пăрахса кайса хĕрĕх те пĕр кунччен яхăна пымаççĕ тет.* Во время пивоварения злые духи соблазняют че-

ловека класть больше хмеля. Ангелы же, когда кладут хмель, говорят: *пелет! пелет!* и покидают человека на сорок один день✍ [Ашм9:157].

ПЕРУК [п’эру́к]. *Старое Чекурское* [Ашм9:168].

ПЕС[1]: ПЕС ТĔСЛĔ [п’э́с т’ь́сл’ь] коричневый. *Пес тĕслĕ саччин.* Коричневый сатин. *Кошки-Новотимбаево* [Ашм9:170].

ПЕҪĔЯН [п’эʒьjа́н]. *Курмышский уезд* [Ашм9:171].

ПЕТЕ [п’эд’э́] беда? *Хĕнессе хĕнерĕм, пете туимерĕм*. Бить-то побил, *пете* не почувствовал✍ [Амш9:171].

ПĔЛĔТ ҪУЛĔ [п’ь́л’ьт’ ҫу́л’ь] путь движения облаков? *Жертв. тетр.* [Ашм10:203].

ПĔЛĔТЛĔХ [п’ь́л’т’л’ьх’] облако; место, где образуются облака? материал идущий на образование облаков? *Тĕнĕрен тухан кăвак тĕтĕм пĕлĕтлĕхе каят та йыш пулат.* Выходящий из окошка серый дым уходит в облако и будет *йыш*✍. Здесь *-лĕх* просто для склада (примечание Н.И. Ашмарина) [Ашм10:203].

ПĔЛТТĔМ [п’ь́л’т’:ьм’]**.** *Пĕлттĕм çĕрĕм çок.* Я ничего не знаю. *Средние Юмаши* [Ашм10:205].

ПĔНТĔКИ [п’ьн’д’ьг’и́] в загадке о *çырла* – ягоде. *Пĕчĕкиҫ пĕнтĕки пуҫ çапса ларать.* Маленький *пĕнтĕки* бьет поклоны✍**.** *Яжуткино* [Ашм10:205].

ПĔР ҪИ [п’ь́р’ ҫи́] полный? *Ачам, сана мĕн парам-ши? Пĕр ҫи карта лашам пур, сана халал пултăр-и!* Доченька, что же тебе дать? Есть лошадь в *пĕр ҫи* двор, пусть тебе будет завещано!✍ *Собрание* [Ашм10:225].

ПĔР ҪЎЛ [п’ьр’ ҫү́л’] сразу? в один прием (?) в пословицах. *Йăлхав вăкăр пĕр ҫўл ĕҫлет теҫҫĕ. Собрание.* В «Сборнике чувашских пословиц» (Чебоксары, 1925) автор к этой пословице (№ 330) сделал примечание: Это выражение непонятно. Перевод дан такой: Ленивый вол один год работает. Но в сноске автором же сделано примечание: Не значит ли здесь *пĕр ҫўл* то же, что тат. *берьюлы* сразу? В этом же сборнике под № 222 приведен вариант этой пословицы: *Ӳркӳҫ вăкăр пĕр ҫўл чĕкĕрнĕ* ‘Ленивый бычок дрищет сразу (в один прием)’. В сноске дано объяснение: Здесь *пĕр ҫул* – татарское *берьюлы*. Тут же под № 223 имеется другой

вариант этой пословицы: *Ӳрхи мăкăр трук чĕкĕрнĕ.* Перевод тот же [Ашм10:225–226].

ПĔРĔЛЧĔК [п’ь´р’ьл’čьк’] в загадке о *лампăпă* – лампе. *Пĕрĕлчĕк – чарăлчăк, Илтирей куçĕ чарăлчăк. Пĕрĕлчĕк* – пучеглазый, глаз Илтирея вытаращенный✍. *Новая Лебежайка* [Ашм10:231].

ПĔРĔМĔРЧ [п’ь´р’ьм’ьр’ч] то же, что **пĕр ĕмĕрччен** на некоторое время? *Пĕрĕмĕрч апла пултăр та, эпĕ кайăп-и ун патне!* Пусть будет *пĕрĕмĕрч* так, пойду ли я к нему!✍ *Старое Чекурское* [Ашм10:218].

ПĔРИТЕН [п’ьр’ид’э´н’] известный промежуток времени? *Унта вăл пĕритен выртать, ун чух никама та калаçма юрамасть.* Он там полежит *пĕритен,* в это время никому не позволено говорить✍. *Староганькино* [Ашм10:231].

ПĔРТИ [п’ьр’д’и´]. *Çеçен, пĕрти, хирте тилĕ юртать тарай тутрисене витĕнсе.* В степи, *пĕрти,* бежит лиса, укрываясь шелковыми платками✍. *Самарская губерния. Шăнкăр, пĕрти, шăнкăр шăнкăрав килет, кам килет-ши, тăван, тухса пăх.* Зконкий, *пĕрти,* звонкий колокольчик слышится, кто же идет, родной, посмотри✍. *Самарская губерния* [Ашм10:236].

ПĔРТИН [п’ьр’д’и´н’] песенная вставка. *Чупрăм, пĕртин, антăм эпĕ çырмана.* Побежал, *пĕртин,* спустился я в овраг✍. *Самарская губерния.* › **пĕрти** [Ашм10:236].

ПĔСĔРКЕ [п’ьзьр’г’э´]. *Йĕтĕн епле пĕсĕрке, кĕпи епле йăлтăрка.* Лен какой *пĕсĕрке,* платье какое блестящее✍. *Средние Тимерсяны* [Ашм10:239].

ПĔСĔРМЕН [п’ьзьр’м’э´н’]. *Хамăра килсе вĕлерсе каясран хăраса пĕсĕрмен вĕçсе тохатчĕ поль.* Наверное, из-за страха, что убьют, чуть не испустил *пĕсĕрмен*✍. *Средние Юмаши. Паçăр кӳлле ача шывва кая панă терĕç те, хамăр ачасĕм кайнă поль тесе пĕсĕрмен вĕçсех тохрĕ.* Когда сказали, что какой-то ребенок утонул, подумалось: не наши ли, и *пĕсĕрмен* испустил✍. *Средние Юмаши. Ашшĕ тавăрннă чохне ачисĕм ах тор тĕпĕртетеççĕ, ашшĕ ерипе кĕчĕ те эсир мĕн тĕпĕртететĕр тесе пĕсĕрмен кăларат вит.* Ко времени возвращения отца дети очень сильно шумели, отец медленно вошел и спросил: что

вы так шумите? чуть *пĕсĕрмен* не застивил испустить✍. *Средние Юмаши* [Ашм10:239].

ПĔТ[4] [п’ьт’] конец? *Туртма пĕлсен – тур пулăн, пĕлмесессĕн – пĕт пулăн.* Если сможешь потянуть – будешь богом, не сможежшь – будешь *пĕт*✍. *Комиссаров Г.И., с. 51* [Ашм10:250].

ПĔТТРЕ [п’ьт’р’э´]. *Ачан хырăмĕ пысăклансан пĕттре сутараççĕ.* При вздутии живота ребенка заговаривают *пĕттре*✍. *Старое Чекурское* [Ашм10:257].

ПĔХĔМĔЛЕ [п’ьγ’ьм’ьл’э´] в моленье, искаженное вместо **пĕсмĕлле** молитвенное начинательное возглашение? *СПВВ. Х. Пĕхĕмĕле, çырлах, сĕмĕле, пĕхĕмĕле. Ядр.* [Ашм10:262, 240].

ПИЕШНЕ [п’ийэш’н’э´] пешня? *Старое Чекурское* [Ашм9:199].

ПИК[2] [п’и´к’] в составе некоторых дохристианских имен: *Пикментей, Пикпав, Пикпăлат* [Ашм9:200].

ПИКЕ: СУЙ ПИКЕ [сýj п’иг’э´] то же, что **суйланчăк** оборыш? *Суйлакана суй пике лекнĕ (малтан лайăх хĕр суйласа çӳрет те кайран усал хĕрех илсе хурать).* Излишне разборчивому досталась *суй пике* (вначале ищет хорошую невесту, а потом берет плохую же)✍. *Новые Кармалы.* Ср.: *Суйлакана суйланчăк лекет.* Капризному достаются остатки✍. *Трехбалтаево.* › **суя аки** девушка, обнадеженная сначала женихом, но потом получившая отказ ввиду замены ее другой невестой. **суя пичи** парень, который получает сначала согласие девушки выйти за него замуж, но затем получает отказ ввиду замены его другим лицом [Ашм9:201; Ашм11:163, 160, 161].

ПИКЕ ЧУРА [п’иг’э´ чурá] барышня-рабыня? *Бугульминский уезд.* › **танпаш** в речи дружки на свадьбе. *Е, тав сана, танпаш* (написано *танбаш*), *çĕнĕ хăта хурăнташ! пике чура юлташ!* Спасибо тебе, *танпаш,* новый родственник-сват! дружище госпожа-рабыня✍. *Бугульминский уезд.* Описка вместо **тантăш** ровесник, сверстник? [Ашм9:201; Ашм13:183, 184].

ПИКЕÇКĔРӲ [п’иг’эçк’ьр’γ´]. › **пике** барышня, барыня, госпожа [Ашм9:203, 200–201].

ПИКĔН[2] [п’и´г’ьн’]. *Ак хай мишавай пире Корти пикĕне мăкăрлантара пуçларĕ.* Вот межевик начал нас Гордей *пикĕне* ругать✍. *Большие Яныши* [Ашм9:204].

ПИКЛИ [п’ик’л’и´] в загадке о *юс* – горностае. *Пĕчĕкçеççĕ пикли, хӳри вĕçĕ туйăкли.* Маленький *пикли,* конец хвоста *туйăкли*✍ [Ашм9:204].

ПИКПИКИ [п’ик’п’иг’и´] название музыкального инструмента? *Пикпикипе шăхăртса.* Издавая свист на *пикпики*✍ [Ашм9:205].

ПИЛЕМПИ [п’ил’эм’б’и´] в загадке о *кантăр вăррине çерçи кăларса илни* – о выклевывании конопляных зерен воробьем. *Илемпи куçне пилемпи кăларса илнĕ.* Глаз Илемпи выклеван *пилемпи*✍. *Т. II. Загадки* [Ашм9:209].

ПИЛЕН[2] [п’ил’э´н’], **ПИЛЛЕН** [п’ил’:э´н’] быть благословенным? *Пиленсе каят.* Уходит *пиленсе*✍. *Старое Чекурское* [Ашм9:209].

ПИЛЕНПИ [п’ил’эн’б’и´] в загадке о *качака чĕччи* – вымени козы. *Пиленпин иккĕ.* У *пиленпи* две✍. *Тораево* [Ашм9:209].

ПИЛНИ [п’ил’н’и´] стекло? *Эх аттеçĕм, аттеçĕм! Кунтан эпĕ кайсассăн пилни карăнтăк илсе ларт.* О, батюшка! Когда я уйду отсюда, поставь *пилни* окно✍. *Образцы. Эпĕ ларнă вырăна пилни карăнтăк илсе ларт.* На то место, на котором я сидел, вставь *пилни* окно✍. *Альшеево* [Ашм9:214].

ПИМПЁЛ [п’и´м’б’ьл’] то же, что **пимпă** зяблик? [Амш9:214].

ПИМПЁЛТЕТ [п’им’б’ьл’д’э´т’] название птички (?) в загадке о *шăпăр* – венике. *Пĕр пĕчĕкçĕ пимпĕлтет пĕтĕм кил-йышне хускатать.* Маленький *пимпĕлтет* весь дом приводит в движение✍ [Ашм9:214].

ПИМПИ [п’им’б’и´] то же, что **пимпă** зяблик (?) в загадках о *çырла* – ягоде (1), *кантăр, сала кайăк* – конопле и воробье (2). 1. *Пĕчĕк пимпи пуçне йăтимаçть.* Маленькая *пимпи* не держит голову✍. *Отрыванов. Пĕчĕк пимпи пуçне чиксе ларĕ.* Маленькая *пимпи* будет сидеть с поникшей головой✍. *Ванькино.* 2. *Пимпи пуçне симпи сăхать.* Голову *пимпи* клюет *симпи*✍. *Абызово* [Ашм9:214].

ПИН[1] [п’и´н’]. *Хурăнсурăн хĕрĕсем, хĕрĕсем хĕвел тухаччен çывăраççĕ, пил (пин?) тăмани пырсассăн сиксе тăни сисĕнмĕ.* Девушки из Хорнзора спят до восхода солнца, когда приходит сова *пил,* не почувствуешь, как вскочат✍. *Коракии* [Ашм9:214].

ПИПĂН [п’и´бън]. *Старое Чекурское* [Ашм9:217].

ПИПЕР [п’иб’э´р] название какой-то травы. *Хочехмат* [Ашм9:217].

ПИПИ[2] [п’иб’и´]. *Пипи куçне шур илĕ.* Глаз *пипи* затянется бельмом✍. *Собрание. Пипи, пипин карти хыçĕнче лăпсăр-лапсăр хĕр ларать. Пипи,* за оградой *пипи* сидит неопрятная девушка✍. *Ойкасы* [Ашм9:217].

ПИР[2]**: ПИР ЙЫВĂÇÇИ** [п’и´р’ jы[и]въç:и´] название дерева. *Пир йывăççи.* Дерево (*лутра* низкое). *Шибачево. Питушкино. Пир йывăççи.* Тополь. *Илгышево. Большие Хирлепы* [Ашм9:219].

ПИРЧЕЙ [п’ир’čэ´j] то же, что **пирче**[2] затвердеть, засыхать, заживать, задернуться (о ране)? *Пирчеес. Степанов* [Ашм9:228, 227].

ПИСĔР[2] [п’и´зьр’] то же, что **писев** румяна? *Писĕр тесе пите аванлатма сĕрекен краска калаççĕ. Писĕр* называют краску, которую используют для приведения лица в порядок✍. *Янтиково* [Ашм9:230, 229].

ПИÇНИ-ХУÇНИ [п’иçн’и◡ууçни´ы] яства? *Алăкран кĕтĕм, çӳле пăхрăм, пиçни-хуçни эпĕ куртăм.* Вошел в дверь, посмотрел наверх, я увидел *пиçни-хуçни*✍. *Юркин* [Ашм9:234].

ПИТЕК [пуд’эк’]. *бран. арçури питек(к)и, упăте питек(к)и* или просто *упăте* обезъяна [Ашм9:240].

ПИТТĔКЕЛ [п’ит’:ьг’э´л’]. *Тетюшский уезд* [Ашм9:245].

ПИЧĂК [пи´čък]. › **пичк** [Ашм9:248, 249].

ПИЧЕПЛĔ [п’ичэ´п’л’ь] то же, что **пичетлĕ** имеющий печать (?) в причитании невесты. *Хусантан илнĕ шел тутăр, тăватă кĕтесси пичеплĕ, ах аттеçĕм, аннеçĕм, эп каясси хисеплĕ.* Купленный в Казани платок, четыре угла *пичеплĕ,* ой, батюшка, матушка, мой отъезд уважительный✍ [Ашм9:247].

ПИШЕШ [п’иж’э´ш’]. Описка вместо **пилеш** рябина? *Пишеш айĕн çул турăм, эпĕ пишеш çул туман, эпĕ çырлишĕн çул турăм.* Под *пишеш* проложил дорогу, я не протоптал *пишеш* дорогу, я проложил дорогу ради ягоды✍. *Никифоров* [Амш9:253].

ПИШТЕ[2] [п’иш’т’э´] вид? *Хоралт таврашне тутарса пĕтернĕ, пĕрте пишти çок.* Что-то наделали со строением, никакого *пишти* нет✍. *Средние Юмаши* [Ашм9:253].

ПИШТЕСĔР [п’иш’т’э´зьр’] безобразный? *Средние Юмаши* [Ашм9:253].

ПОТВЕН [потв’э´н] название напитка? *Потвен – серте татса килеççĕ, хоранта пĕçереççĕ, ала çинче сăрăхтарса сĕрсе илеççĕ, тутлă усла (ăсла) ăшне пĕчикках çĕпре яраççĕ, вара пĕрле хопăрласа çыхса йӳçĕтеççĕ чӳлмек ăшĕнче. Потвен* – приносят свежее серде, варят в котле, процеживают через сито, добавляют в сладкое сусло немного дрожжей, затем оставляют в горшке киснуть✍. *Альгешево* [Ашм10:47].

ПЕТРУШКИ [п’этрушк’и´] присловье (?) в зумной загадке о *чĕлĕм* – курительной трубке. *Пичке пăкки петрушки. Собрание* [Ашм9:173].

ПОХИЛКЕ (?) [поγ’ил’г’э´] бахилы. *Иртсе карĕ пирĕн ĕмĕр похилкепе-çăпатапа çак пырлакра çӳресе.* Прошел наш век, мы ходили в *похилке* и лаптях по гололедице✍. *Эльбарусово* [Ашм10:57].

ПОЧАЙКА [почajгá]. *Почайка чукун. Почайка* чугун✍. *Старое Чекурское* [Ашм10:55].

ПОЯНСКИ [поjáнск’и] в загадке о *чакак* – сороке. *Хура сăран аттипе, поянски пуççипе, кăримăски ĕçлĕкпе.* В черных кожаных сапогах, с *поянски* головой, в крыской шапке✍. *Актай* [Ашм9:255].

ПРАМОЙ [прамój]. *Малое Карачкино* [Ашм10:267].

ПРАПАЛ [прабáл] в загадке о *кăмака çăварĕ* – устье печи. *Прапал тавращĕ хап-хура.* Вокруг *прапал* черным-черно✍. *Шаймурзино* [Ашм10:268].

ПРИХУТЛĂХ [пр’иγýтлъх] приход? *Тупташ çулĕ мăн çӳл-çи* (*çулши?*)*, мăн çул-çи мар – прихутлăх, прихутлăх мар – каскалăх, касак майри (çавă пур).* Дорога Тупташ большая ли, не большая – *прихутлăх,* не *прихутлăх* – место, изобилующее казаками, жена казака (она есть)✍. *Собрание* [Ашм10:274].

ПРУККУН [прук:ýн]. *Старое Чекурское* [Ашм10:275].

ПУКЛЕШ [пукл’э´ш’] то же, что **пуплеш** переговариваться? *Айхай* (вариант *ай-юй*) *мĕн калаçар, мĕн пуклешер? Йӳçĕ ĕçсе тутлă калаçар.* Ай-гай, о чем поговорить, о чем *пуклешер?* Будем горькое пить и вкусно говорить✍. *МПП* [Ашм9:260, 292].

ПУЛАК [пулáк]. *Кăçал ака тума кампа пулак пултăн* (с кем пашешь)? *НИП.* По объяснению *НИП,* **пулак** артель, коллектив;

пулак пул объединиться в артель, например, для проведения пашни [Ашм9:276].

ПУЛĂÇ [пу́лъç] вместо **пулăш**[1] помощь, польза, подмога? *Пахчана та лартрăм улма йывăç укçана та пулăç пули тесе.* В огороде посадил яблоню, может, деньгими *пулăç?*[✍] *Микушкино* [Ашм9:280].

ПУЛЕС: ПУЛЕСЛĔ [пул'э́сл'ъ] в загадке о *çырла* – ягоде. *Пĕчĕкиç пулеслĕ пуçана ларать.* Маленький *пулеслĕ* свояк сидит[✍]. *Коракши* [Ашм9:277].

ПУЛКĂР [пу́лгър]. *Турх.* [Ашм9:281].

ПУЛТĂРКИ [пулдърг'и́] искажение из **пултăр-кин** жена младшего деверя или жена младшего шурина? *Ай, пултăрки, ялтăрки, аку патне ларма пыр, шур пĕремĕк çимешкĕн.* Ай, *пултăрки, ялтăрки,* приди на посиделки к сестре, попробовать белый пряник[✍]. *Образцы* [Ашм9:284].

ПУЛЬСĂН [пу́л'зън]. *Кĕмĕл çĕрĕ пульсăн куç çутатмасăр çуталмасть.* Серебряное кольцо – *пульсăн* глаз, не заблестит, пока, не почистишь[✍]. *Мачамуши* [Ашм9:286].

ПУНА [пуна́]. Описка вместо **пупа** поп в дативе? *Тухи-тухми хĕрсемшĕн пуна кайса ан тӳрлет.* Из-за девушек, которые сомневаются – стоит ли выйти, исправить *пуна* не нужно[✍]. *Юркин* [Ашм9:290].

ПУПЕС: ПУПЕСЛĔ [пуб'э́сл'ъ] в загадке о *çырла* – ягоде. *Пĕчĕкиç пупеслĕ* (*пунеслĕ* или *пулеслĕ?*) *пуç çапа ларать.* Маленькая *пупеслĕ,* кланяется[✍]. *Орл. Ц, 215* [Ашм9:291].

ПУПУЛЬ [пубу́л']. *Пупульне чиксе хучĕ тет.* Положил в *пупуль*[✍]. *Ку патшанăн укçи ăçтине пĕлет те: пупулĕнче тет.* Этот узнал, где хранятся деньги царя, и сказал, что в *пуплул*'е[✍] [Ашм9:292].

ПУРЕ [пур'э́] в загадке о *çекĕл* – крючке. *Пуре кам патăр?* Кто даст *пуре?*[✍] *Кораккасы* [Ашм9:300].

ПУРИСА [пур'иза́] то же, что **пуррисем** наличествующие, имеющиеся? *Камăн ачасем пуриса харпăр ачăрсен чарас пулать (çапла урамра алхасса, кулса, ахăрса, вăляса вĕсем пăсăлаççĕ).* Те, кто *пуриса* детей, должны их придержать (они портятся, хулиганя на улице, смеясь, играя)[✍]. *Цивильский уезд* [Ашм9:300].

ПУРЛА[1] [пурлá] белить (?) в загадке о *сухан хуппи* – шелухе лука. *Çĕрлерĕм, çĕрĕк пăяв туртрăм, пур пурларăм, пур халăха юрарăм.* Заночевал, гнилую веревку тянул, мел *пурларăм,* всем угодил✍. *Т. П. Загадки* [Ашм9:306].

ПУС[6] [пýс] сосед? *Çичĕ ют, ют пуссем килет-çке, пирĕн тăвансем ăçта-ши?* Чужие *пус* приходят, где же наши родственники?✍ [Амш10:5].

ПУСМИРĂ [пусм'и´ръ] в загадке о *хăмăтла* – клопе. *Коракши. Лапчăк сăмса пусмирă.* Приплюснутый нос *пусмирă*✍ [Ашм10:13].

ПУÇĂ [пýžъ] колдун. Не ошибка? *Питушкино* [Ашм10:35].

ПУÇĂР [пýžър]. *Тепĕр пасара пуçăр вăрра çу сутма ярат тет.* На следующий базар отправляет *пуçăр* вора продавать масло✍ [*N.*Ашм10:36].

ПУТĔ [пýд'ь]. Описка вместо **путек** ягненок? *Пирĕн путĕ пĕтреке.* Наш *путĕ* кудрявый✍. *Орлов В.Н.* [Ашм10:47].

ПУТИН [пуд'и´н'] в свабедной песне. *Путин-путин повоски та, пускилсен виç лаши та ĕçкейĕн. Путин-путин* повозка, у соседей три лошади и все деверя✍. *Качалово* [Ашм10:45].

ПУТРЕЧĔК [путр'э´čък'] подрядчик? [Амш10:51].

ПУТРИШĔР [путри´ж'ър'] потешный? *Пырсан-пырсан кĕсем пĕр пĕчĕккеççĕ пýрте, чăхă ури çинче тăракан çĕре çитеççĕ тет. Ах камăн-ши ку пĕр путришĕр пýрт тет.* Шли долго и дошли до небольшого дома на курьих ножках. Ах, чей же этот *пĕр путришĕр* дом?✍ Возможно, что здесь *пĕр путришĕр* есть то же, что *пĕр путишле. Альшеево* [Ашм10:51–52].

ПУТШИЛЕ (?) [путш'ил'э´]. Знак вопроса в оригинале. *СПВВ. Х* [Ашм10:53].

ПУТЬ[2] [пýт'] в выражении **путь, тĕрне!** Так кричат летящим журавлям. < рус. *путь?* [Амш10:54].

ПЎКНЕК [п'ўк'н'э´к'] то же, что **пĕтнĕк** мята? *Сикрĕм кĕтĕм пахчана пўкнек çулçи татмашкăн. Пўкнек çулçи пулмарĕ, мăкăнь чечеки пулайчĕ.* Забежал в огород нарвать листья *пўкнек.* Листьев *пўкнек* не оказалось, но нашлись маковые цветы✍. *Средние Юмаши* [Ашм10:76].

ПӲНЕСЛӲ [п’үн’эсл’ү´] в загадке о *çĕр çырли* – землянике. *Пĕчĕкиç пӳнеслӳ пуç çапа-пуç çапа ларĕ.* Малюсенькая *пӳнеслӳ* будет бить челом✍ [Ашм10:82].

ПӲРТĔШ ХĂМПИ [п’ү´р’д’ьш’ хъмб’и´] в наговоре. *Ырă мĕн туррăн çитмĕл те çич пӳртĕш хăмпи. Çав çитмĕл те çич пӳртĕш хăмписене хăçан та хăçан юн тулса çĕре ӳктĕр, çавăн чухне тин этем ывăлĕ-хĕрĕ çĕнтерсе илтĕр.* У доброго бога семьдесят и семь *пӳртĕш хăмпи.* Когда эти семьдесят и семь *пӳртĕш хăмпи* заполнятся кровью и упадут на землю, пусть только тогда человеческий род победят✍. *Изванкино.* › **шăпăрла** название наговора [Ашм10:92; Ашм17:325–326].

ПЫЛ ПĂТТИ [пы´л път:и´ы] название растения? *Çĕмĕрт шăрши те, пыл пăтти тути те, лантăш шăрши те сăмсана çурать.* Ощущается сильный запах черемухи, вкус *пыл пăтти,* запах ландыша✍. *Чехов, с. 38* [Ашм9:179].

ПЫНЬКА: ПЫНЬКАЛА [пын’гала́] название игры. *Пынькала выляс – майралла чупмала выляс.* Поиграть в *пынькала* – поиграть в бега городской женщины✍ [Ашм9:182].

ПЫРШĂ-КАНТРАШКА [пыржъ◡гандрашка́] тонкие кишки? *Орауши* [Ашм9:192].

Р

РАВИС [рав’и´с] [Ашм10:279].

РАКИ: РАКИ КАРЧĂК [раг’и´ ка́рсък] *диал.* злюка, ведьма, коварная, злая женщина [ЧВС 1985:328].

РАКУЛЬКА [рагул’га́]. *Русаково* [Ашм10:280].

РАСМАН [расма́н] в загадке о *ака пуçĕ* – плуге. *Хирте расман алси ларать.* В поле сидит рукавица *расман*✍. *Старые Айбеси* [Ашм10:282]. *Расман* – древний мифический образ? [ЧХС 5:333].

РИШĔК [р’и´ж’ьк’] название гриба, рыжик? *Сятраево.* **хорăн ришĕк** название съедобного гриба серовато-красного цвета. **шĕшкĕ ришĕк** название съедобного гриба серовато-красного цвета [Ашм10:291].

С

САКĂРЧĂК [сáгърчък] в загадке о *кăмака хысипе сак хыси* – ребрах печи и скамейки. *Сак айĕнче сакăрчăк, кăмака айĕнче кăмăрчăк.* Под скамейкой *сакăрчăк,* под печью *кăмăрчăк*[✍]. › **сакмăрчăк, сак хыси** край нар или лавки; наружный крайний брус нар; обшивка из доски, прибиваемая по краям нар или лавки. *Собрание* [Ашм11:20, 23, 16].

САККАЛИЙĂН [сак:ал’ийън]. *Шор кримиски калпакне чалăш лартар-и, лартар-и. Апи илсе панă пыçахийĕ саккалийăн корнтăр-и. Апи туса панă кĕпине тăхăнам-и, тăхăнам-и, тĕрлĕ те тĕрлĕ шалаварĕ саккалийăн корнтăр-и. Ати ĕçлетсе панă поставне тăхăнам-и, пичи илсе панă карттусĕ саккалийăн корнтăр-и. Хам ĕçлетнĕ кĕпее тăхăнам-и, ати илсе панă аттисам саккалийăн кортнăр-и.* Белый крымский колпак поставим ли вкривь. Пусть будет смотреться *саккалийăн* ремень, купленный матерью. Рубашку, сшитую матерью, одену ли, пусть узорчатые шаровары будут смотреться *саккалийăн.* Одену ли сукно, сшитое отцом, пусть будет смотреться *саккалийăн* картуз, купленный старшим братом. Одену ли рубашку, сшитую мне на заказ, пусть сапоги, купленные отцом, будут смотреться *саккалийăн*[✍]. *Якейкино* [Ашм11:20].

САКМАР [сакмáр]. *Самарпа сакмар хушшинче шурă куян выртать парĕпе.* Между Самарой и *сакмар* лежит белый заяц с парой[✍]. *Лашм.* › **сакмар чулĕ** название камня. *Сакмар чулĕ – чăп-чăмăр, яка.* Камень *сакмар* – совершенно округлой формы, гладкий[✍]. *Н. Седяк.* [Ашм11:23].

САКОЛ [сагóл] [Ашм11:17].

САКСИК [сакси´к’] в загадке о *чакак* – сороке. *Саксик кутлă, пурçăн йĕмлĕ, кăшт çĕлĕклĕ.* С задом *саксик,* в шелковых штанах, немного с шапкой[✍]. *Новая Лебежайка* [Ашм11:23].

САКТИЛЕК [сакт’ил’э´к’] в загадке о *пăру, ача, кăмакари вутă* – теленке, ребенке и огне в печи. *Саканче мăш-мăш, сак çинче сактилек, кăмака çинче каптилек.* В подполе *мăш-мăш,* на скамейке *сактилек,* на печи *каптилек*[✍]. *Собрание* [Ашм11:24; Ашм6:83].

САКТИРАК [сакт’ира́к] в загадке о *кушак* – кошке. *Сак çинче сактирак, кăмака çинче каптирак.* На скамейке *сактирак,* на печи *каптирак*✍. *Тораево* [Ашм11:24].

САЛА КАЙĂК ТОРРИ [сала́ ка́йък тор:и´ы] . *Сала кайăк торрине тăваткал тăваççĕ. Сала кайăк торри* делается квадратным✍ [Ашм11:25].

САЛТАК ПУҪ [салда́к пу́ç] солдат? *Салтак пуç пул терĕ те, çавăнпа салтак пултăм пуль.* Сказал, чтобы стал *салтак пуç,* наверное, потому стал солдатом✍. *Янтиково* [Ашм11:37].

САЛТИ [салди´ы]. *Салти арăм икĕ çурхам (хулçи) çĕкленĕ. Салти* жена вышила два узора на рукаве женской рубахи✍. *Собрание* [Ашм11:37].

САМ[2] [са́м]. *Сана сам-çатса-сам илетпĕр.* Тебя возьмем *сам-çатса-сам*✍. › **Пит тури** название киремети. *Пирĕн ялăн аслă киреметне Пит тури теççĕ. Вăл киремете уй ячĕпе калаççĕ. Çырлах тет-ха, Пит тури, аслă кĕлĕ (киремет, анчах вăл хăраса калани), сана сам çатса сам илетпĕр…* Главную киреметь нашего села называют *Пит тури.* Киреметь так называется по названию поля. Смилостивись, *Пит тури,* великая молитва (киреметь, но это сказано из боязни), тебе *сам çатса сам* берем✍ [Ашм11:38; Ашм9:240].

САНЧĂРАВ [сан’ĕрав]. *Альшеево* [Ашм11:47].

САПАНА [сабана́] [Ашм11:52].

САПАХ [саба́х]. *Чувашские песни* [Ашм11:53].

САПĂР[3] [са́бър]. *Самара кайрăм сапăрпалан.* В Самару поехал с *сапăр*✍. *СПВВ. Сапăр* (?). *СПВВ. Х.* Знак вопроса в оригинале [Ашм11:54].

САППАСИЛЛИ [сап:азил’:и´] то же, что **саппас илни** про запас? [Ашм11:56].

САПРИ [сапри´ы] в загадке о *чăхă сĕлĕ çини* – клевании овса курицей. Древнее причастие на *-рă* с афф. 3 л.? Ср.: **саппи** посыпающий. *Сапри сапĕ, тупри тупĕ. Сапри* посыплет, *тупри* найдет✍. *Орл. II, 215. Сапри сапат, тупакан тупат. Сапри* сыплет, ищущий находит✍. *Урмаево* [Ашм11:57, 56].

САПУН [сабу́н] то же, что **саппун** фартук, передник, запон. Описка? *Сапун кантӑри.* Подвязка у фартука. *Чувашские песни* [Ашм11:53, 58].

САПХЕХ [сапх’эх’] название ткани? *Сапхех кӗпе* (материя?). Рубашка из *сапхех*. *Кубово* [Ашм11:57].

САРАЙЛӐХ [сара́йлъх] навес, сарай? *Алӑк умӗнче сарайлӑх, сарнӑ тӳшек тӑршшипе, эпир килтӗмӗр çак киле авалхи йӑла тӑршшипе.* Перед дверями *сарайлӑх,* постелены перины вдоль, мы пришли в этот дом по велению дрвених традиций. *Альшихово* [Ашм11:62].

САРАМПИ [сарамб’и´] в загадке о *сысна чӗччи, ӗне чӗччи, качака чӗччи* – вымени свиньи, коровы и козы. *Сакӑр сарампи, тӑват тӑрампи, ик илемпи.* Восемь *сарампи,* четыре *тӑрампи,* две *илемпи*. *Яжуткино. Сарампин – саккӑр, тӑвампин – тӑваттӑ, илемпин – иккӗ.* У *сарампи* – восемь, *тӑвампи* – четыре, *илемпи* – два. *Чуралькасы. Сарампин саккӑр.* У сарампи восемь. *Собрание* [Ашм11:63].

САРАН[2] [сара́н]. *Сан инкӗне шӑтӑк хутаç хам парам-и? Саран çулпе пултран татма хам ярам-и?* Дам твоей тете дырявый мешочек? Пусть идет рвать борщевик по дороге *саран* [Ашм11:63].

САРАНА КУРӖК [сарана́ ку́р’ьк’] название растения lilium martaqon? *Сарана курӗк; хӑш çынсем сар ӳксе чирлесе каяççӗ, унтан чӗрӗлес тесен çак курӑка вӗретсе ӗçес пулать те тӑта çӑвӑнас та пулать. (Сарана курӗк тымарри – питӗ чаплӑ курӑк). Сарана курӗк;* некоторые люди заболевают желтухой, чтобы вылечиться от нее, нужно пить отвар этой травы, также нужно им помыться. (Корни *сарана курӗк* – очень хорошая трава). *Орлов П.И. Сергеев Д.С. № 63* [Ашм11:64].

САРАНПИ [саранб’и´] в загадке о *сысна чӗччи* – сосках свиньи. *Саранпин саккӑр.* У *саранпи* – восемь. *Тораево* [Ашм11:64].

САРЛӐ [са́рлъ]. Описка вместо **сарӑ** желтый? *Сарлӑ ука пек пӗвӗмçӗм.* Мое тело, как *сарлӑ* позумент. *Старые Бурундуки* [Ашм11:73].

САРПАЙ [сарбáj]. *Сарпай арăм – сар арăм, сарне (саррине) çаксан пирĕн арăм.* Жена *Сарпай* – белая женщина, когда повесит сара, становится нашей женой✍. *Тимирзькасы* [Ашм11:74].

САСТАВ [састáв] < рус. *застава?* [Ашм11:80].

САТАЛ [садáл]. *Сатал çинчи кушакне куçне шăрпăк кĕнĕ те.* В глаз кошки, сидевшей на *сатал,* попала заноза✍. *Ядр.* [Ашм11:81].

САТЛАМА [сатламá]. *Сатлама хопаххи. Якейкино* [Ашм11:82].

САХИ [саγ'и´]. *Альшеево* [Ашм11:86].

САЯК [сajáк] 1. костяная застежка, костная пуговица? < тат. *сөяк* кость? 2. описка вместо **сапак** петля у пуговицы и вся пуговица? В том же примере слово *саяк* заменено на *сапак*. *Йывăçран саяк тунни çук, ырă тумтир çумне хунни çук.* Не делается *саяк* из дерева, не прилагается к добротной одежде✍. *Юркин* [Ашм11:4, 50].

САЯП (?) [сajáп]. *Лашсем начар мар-и? Кастарнин саяп кайни?* Лошади неплохие? У кастрированной *саяп* прошел?✍ [Ашм11:4].

СĂЛĂ [съ´лъ]**.** *Епле пулсассăн та, халер чирĕ çаклансассăн та çынна ăна сыватма час-час тăрăшас пулать. Ăна сыватнă чух мĕн-мĕн тăвас пулать-ши? ...чейпе вĕретнĕ шывсăр пуçне урăх ним те ĕçме юрамасть; сăлăне ăшăтса е ăшă кĕле хутаçа тултарса хырăм çине хурас пулать, яланах вăл ăшă пултăр.* Как бы то ни было, при холере следует постараться вылечить человека. Что же нужно сделать? …кроме чая и кипяченой воды ничего нельзя пить; горячий *сăлă* или золу в пакете необходимо положить на живот, пусть он всегда будет теплым✍ [Вишневский 1905:7].

СĂН[2] [съ´н] то же, что **сим** медовый напиток? *Пӳртĕрсем шурă, саккăр сарă, эпир тухса кайсан пуш юлĕ. Пушă та юлмĕ, мĕн те тумĕ, ик кĕрекĕр тулли сăн пулĕ.* Ваш дом белый, скамьи желтые, когда мы уйдем, дом опустеет. Не опустеет, ничего не случится, будет *сăн* на два застолья✍. *Собрание* [Ашм11:257, 144].

СĂНАРЛАН (?) [сънарлáн] стать похожим. Знак вопроса в оригинале. *СПВВ* [Ашм11:262].

СĂР[2] [съ´р] < араб. 1. тайна. *Сăрне памасть* (или *пĕлĕртмест*). Фасон держит, т. е. старается не ударить в грязь лицом (например, в отношении домашнего обихода, костюма и пр.). *Саратовская губерния. Вăл сăр илчĕ ĕнтĕ.* Она уже взяла волю. *Саратовская губерния. Атьăр каяр, хĕрсем шырар. Хĕрне пăхсан сăрне пăх!* Давайте пойдем, девушек поищем. Посмотришь на девушку, посмотри и на ее *сăр*✍. *Юркин.* 2. обыкновение? *Хама пăхакансене кăшкăрса хăратма сăр илнĕ эпĕ*. Я взял за *сăр* пугать криками тех, кто за мной ухаживает✍. *Канаш* [Ашм11:268].

СĂР[5]**: СĂР-СĂР** [сър◡зъ´р] усилительное слово к слову **пуян** богач, богатый. *Сăр-сăр пуян хĕрĕ эпĕ, сăра хуран укçа пур*. Я дочь очень богатого человека, есть деньги с пивной котел✍. *Яншихово-Норваши. Сăр-сăр пуян, хĕр пуян, сăра хуран укçам пур, алăк хыçне ларттартăм.* Очень богатая девшука, имеются деньги с пивной котел, по моей просьбе поставили за дверь✍. *Юркин. Сăр-сăр пуян тиеççĕ, сăра хураньпе мул ларат.* Поговаривают, что очень богат, деньги с пивной котел✍. *Альшеево* [Ашм11:269–270].

СĂРАВ [съра́в] показ, обозрение, опрос? *Сăрава кăларнă лашине. Çухалнă лашана паллатарма пасара кăлараççĕ, çавна сăрава кăларни теççĕ.* Лошадь вывели на *сăрав.* Найденную лошадь выводят на базар, это называется выводом на *сăрав*✍. *Ораушu* [Ашм11:273].

СĂРĂНТĂ [съ´рындъ] сугроб? *Сăрăнтă – юр купи. Сăрăнтă* – снежная куча✍. *Новые Кармалы.* › **мерекке** нечто потешное и интересное, своеобразное, оригинальное. *Эпĕ пĕр ачана пĕчĕк çуна çине лартрăм та сăрăнтă (юр купи) тăрăх туртса пынă чух сăрăнтă айне çуни-мĕнĕпе яра патăм…* Я посадил маленького ребенка на санки и, когда возил его по *сăрăнтă* (снежной куче), прыгнул под *сăрăнтă* прямо с санками и ребенком✍ [Ашм11:275; Ашм8:226].

СĂРЛĂХ [съ´рлъх] в загадке о *ут кăшкарĕ* – конском щавеле. *Çеçен хирте сăрлăх ларать.* В степи сидит *сăрлăх*✍. *Т. II. Загадки* [Ашм11:269].

СĂРТА [сърда́] плести, чинить? [Ашм11:280].

СĂРТЛАМ [сьртлáм] возвышенный, гористый? [Ашм11:279].

СĂРТЛĂ: СĂРТЛĂ ПИÇХИ [съ́ртлъ п’иçх’и́] название особого пояса. *Шибачево. Чертаганы* [Ашм11:280].

СĂРТТАЙ [сьрт:áj] *бран.* от имени собственного? *Сăрттай* (дубина), *чăскаланса çӳретĕн. Чертаганы.* › **сăрнаккай** так называют глуповатого человека [Ашм11:280, 278].

СĂРХУ [сьрүý] масть лошади? Описка вместо **çăрха** иноходец? *Хура вăрманта хура çук, хура сăрху лашусене кӳлсе пырăр.* В темном лесу нет черноты, придите с запряженными черными *сăрху* лошадьми✍ [Ашм11:280; Ашм13:43].

СĂÇÇИМ [съсçи́м]. *Распойнĕксен асли ампар умне пырать те сăсçим! тет. Ампар алăкĕ яр! уçăлса каять.* Старший из разбойников подходит к амбару и говорит: *сăсçим!* И дверь амбара раскрывается✍. *Канаш* [Ашм11:284].

СЕВРĂМ [сэ́в’р’ъм’] то же, что **севрĕм** досада? *Нуммай çын савнипе выллярăм, çын севрăмне кутерсе* (сердить, поднимать, увеличить?). Людской *севрăмне кутерсе* поиграл любовью многих✍. *Чувашские песни.* › **куттер** [Ашм11:89; Ашм7:52].

СЕВРĔМ [сэ́в’р’ъм’] досада? *Çын севрĕмне кутерсе нуммай çын савнипе выллярăм.* Людской *севрĕмне кутерсе* поиграл любовью многих✍. *СПВВ. Севрĕм* (?). Знак вопроса в оригинале. *СПВВ* [Ашм11:89].

СЕЛИМ [сэл’и́м] песенный припев? [Ашм11:90].

СЕЛКЕМЕ [сэл’г’эм’э́]. *Турхан А.* [Ашм11:91].

СЕНЕПИ [сэн’эб’и́] в песне. *Сенĕк, сенĕк, сенепи, сенĕк тăррине вут хутăм, автан пусрăм, туй турăм, хура куçлă кин илтĕм.* Вилы, вилы, *сенепи,* на конце вил устроил костер, зарезал петуха, провел свадьбу, взял черноглазую сноху✍. *Юркин* [Ашм11:92].

СЕППЕ: СЕППЕ КĂНТĂРЛИ [сэп’:э́ кындърли́ы] паужин. Употребляется в районе с. Бичурино. › **сеппер**[2] паужин [Ашм11:95–96].

СЕРЕНЕ [сэр’эн’э́]. *Шербаши* [Ашм11:96].

СЕРЕП[2]: **СЕРЕПСĔР** [сэр’эп’сьр] весьма, очень? *Серепсĕр аван.* Очень хорошо. *Старые Урмары* [Ашм11:97].

СЕТКЕН [сэт’к’э́н’] то же, что **сĕткен** сок; влага. Описка? [Ашм11:99].

СЕТКЕНЛĔ [сэт’к’э́н’л’ь] сочный. Описка? *Çĕр мĕн чухлĕ сеткенлине халĕ хăвăр та илтрĕр.* О том, насколько земля сочна, вы теперь и сами услышали✍ [Ашм11:99].

СЕХРЕМЕТ [сэх’р’э’м’э́т’] то же, что **сехре хăппи** нечто страшное, ужасное? *Сехре, сехремет. СПВВ* [Ашм11:104].

СĔВЕК[2]: СĔВЕК КĔПЕРРИ [сьв’э́к’ к’ьб’эр’:и] в загадке о *сĕвек кĕперри* – радуге (1, 2) и *пĕлĕтпе сĕвек кĕпери* – облаке и радуге (3). 1. *Атăл урлă хĕлĕх картăм.* Через Волгу натянул струну✍. *Большие Хирлепы.* 2. *Пӳрт урлă чĕн йĕвен утăп.* Через дом переброшу кожаные вожжи✍. *Большие Хирлепы.* 3. *Арпа çуни, пурçăн тилкепи.* Мякинные сани, шелковые вожжи✍. *Орбаши. Çак сĕвек кĕперри çомăра тортать, сĕвек кĕперри тортса хăпартсассăн йĕпе полать теççĕ. Сĕвек кĕперри шу тортса хăпартать тет.* Эта радуга притягивает дождь, когда радуга накачает, будет мокро. Радуга, говорят, поднимает воду✍. *Слепой. Çумăр иртсе кай аннах* (кайсанах? – *Э.Ф.*) *пĕлĕт çине пăхсассăн çичĕ тĕслĕ сĕвек кĕперри курма пулать.* Сразу после дождя если посмотреть в небо, можно увидеть семицветную радугу✍. *Календарь 1910.* › **сĕвен кĕперри, сăрап кĕперри, сĕреп кĕперьи, сĕрем кĕперри, сĕрен кĕперри** радуга [Ашм11:292–293].

СĔВЕН: СĔВЕН КĔПЕРРИ [сьв’э́н’ к’ьб’эр’и́] радуга. *Чебоксарский уезд.* › **сĕвек кĕперри** радуга [Ашм11:293].

СĔВЕШЕН: СĔВЕШЕН КАЙĂКĔ [сьв’эж’э́н’ ка́йъг’ь] название лесной птицы. *Сĕвешен кайăкĕ (вăрманти вĕçен кайăк). Юркин. Вăрмантан вĕçен, çула ӳкен, ялан сĕвешенĕн кайăк чĕпписем; чӳречерен пăхан, чупса тухан, ялан (çав ялсенĕн) хĕрĕсем.* Из леса летишь, дорогу найдешь, всегда птенцы лесной птицы *сĕвешен;* смотришь в окно, выбегаешь, всегда (тех сел) девушки✍. *Юркин* [Ашм11:294].

СĔВĔРĔНЧĔК [сь́в’ьр’ьн’ĉьк’] вялый? *СПВВ* [Ашм11:295].

СĔКĔЛ [сь́г’ьл’]. *Ăна вара масар çине илсе пырса вут хураççĕ те çăкăр хываççĕ, ăна хывнă чухне калаççĕ: умĕнче пултăр, пĕр турамĕ пĕр çăк пултăр теççĕ; умăнта пултăр, сĕкĕл пултăр, çтăмакра* (в раю) *вырттăр теççĕ.* Принося его на кладбище, зажигают костер и закладывают хлеб, во время за-

кладывания хлеба говорят: пусть будет перед ним, пусть один кусок будт равным поклаже; пусть будет перед тобой, пусть будет *сĕкĕл,* пусть лежит в раю✍ [Ашм11:296].

СĔКĔМ: ЛАКĂМ-СĔКĔМ [лагъм◡сь´г'ьм'] рытвины. Из моленья. *Вăрă-хорахран, çырма-çатраран, лакăм-сĕкĕмрен, опакашкăртан хăтарăр.* Избавьте от грабителей, оврагов, рытвин, диких животных✍. *Панклеи* [Ашм11:296].

СĔЛЕМЕН: СĔЛЕМЕН КАЙĂК [сьл'эм'э´н' ка́йък] название какой-то птицы. *Çĕр çĕклейми пӳртсем çине симĕспе кăвак виттертĕм, симĕспе кăвак хушшине сĕлемен кайăксем яртартăм, сĕлемен кайăк мĕн ĕçсе çиет? Тулă çиет те сĕт ĕçет.* По моему велению богатые дома покрыли зеленым и голубым цветом, между зеленым и голубым запустили *сĕлемен кайăк, сĕлемен кайăк* что ест и пьет? Пшеницу ест и молоко пьет✍. Описка вместо **сĕлешен кайăк***?* [Ашм11:298].

СĔЛЕН: СĔЛЕН ПУШШИ [сьл'э´н пуш:и´ы] *бот.* хвощ зимующий [Ашм11:298; ЧВС 1985:359].

СĔЛЕТ: СĔЛЕТ КĔПЕРĔ [сьл'э´'т к'ьб'э´р'ь] радуга. *Сĕлет кĕперĕ – асамат кĕперĕ.* › **сĕвек кĕперри, саламат кĕперри, сĕнет кĕперĕ** радуга. *СПВВ. ЛП* [Ашм11:298].

СĔЛЕШЕН: СĔЛЕШЕН КАЙĂК [сьл'эж'э´н' ка́йък] название сказочной птицы [Ашм11:298; ЧВС 1985:359].

СĔМĔ [сь´м'ь] [Ашм11:306].

СĔМСĔМЕККЕ [сьм'зьм'к':э´], **СĔМСĔМЕККĔМ** [сьм'зьм'к':э´м'ьм']. *Юманкапа юлташĕсем тĕттĕм пирки чарăнчĕç. Сĕмсĕмеккĕм, сĕмеккĕм, çав карчăка çи! терĕç.* Юманка и его товарищи остановились из-за темноты. Они сказали: *сĕмсĕмеккĕм, сĕмеккĕм,* съешь ту старуху!✍ *Сказки и предания, с. 24. Пĕчĕкçĕ ачасене йăпатса вăсемпе аппаланса выляса ларакан çитĕннĕ çын пĕчĕкçĕ ачанăн аллине тытат та унăн пурнисене урăхла ят парса ак çапла калат: ак ку ак – паш пӳрне (пуç пурне), ак ку – палан ӳте (шĕвĕр п[ӳрне]), ӳте тирек, сĕмсĕмеккĕм, качаккине папакки.* Взрослый человек, который сидит с малыми детьми и развлекает их играми, берет за руку ребенка и переименовывает пальцы: вот этот вот – палец *паш* (головной палец), вот этот – *палан ӳте* (острый палец), *ӳте тирек,*

сĕмсĕмеккĕм, качаккине папакки. *Средние Тимерсяны* [Ашм11:306].

СĔНКĔ: АНКĂ-СĔНКĔ [ангъ◡сь´н’г’ъ] обалделый, беспамятный. *Анкă-сĕнкĕ пол.* Будь *анкă-сĕнкĕ*. *Сесмеры.* › **анкă-минкĕ** идиот, глупец, глупый, бессознательный, беспамятный, шальной, обалделый [Ашм11:308; Ашм1:251–252].

СĔНКĔЛ: СĔНКĔЛТЕТ [сьн’г’ьл’д’э´т’] поплестись, еле шагать, еле ходить, побрести. *Ваçили таçта сĕнкĕлтетрĕ ĕнтĕ* (куда-то поплелся; говорят особено о слепом или бессознательном). *Ан сĕнкĕлтетсе çӳре.* Не ходи без дела. *СПВВ. Сĕнкĕлтетсе çӳрет.* Еле ходит. *Янтиково* [Ашм11:309].

СĔРЕМ[2]: СĔРЕМ АПЛЕНКИ [сьр’э´м’ апл’онг’и´] название гриба. *Мыслец* [Ашм11:315].

СĔРЕП[1]: СĔРЕП КĔПЕРРИ [сьр’э´п’ к’ьб’эр’:и´] радуга в загадках. *Атăл урлă пурçын тĕлхепе карнă.* Через Волгу натянули шелковые вожжи. *Бреняши. Т. II. Загадки. Пӳрт урлă чĕн йĕвен ывăтса каçарăп.* Переброшу кожаную узду через дом. *Собрание.* › **сĕрен кĕперри** радуга [Ашм11:319].

СĔРĔМСĔР [сь´р’ьм’зьр’]. *Çĕн çул каçĕ чăхсем тач пурте пĕр май ларсан çав çул тырă лайăх та, пĕр май та сĕрĕмсĕр теççĕ.* Если на новогодний вечер все куры сядут головами в одну сторону, в наступающем году хлеб уродится хорошим и *сĕрĕмсĕр*. [Ашм11:320].

СĔРЛĔН [сь´р’л’ьн’]. *Магницкий 1881.* › **Шĕмшеш** с. Шумшеваши (?) [Ашм11:320; Ашм17:376].

СĔРМЕК [сьр’м’э´к’]. *Степанов* [Ашм11:321].

СĔТ ШУРРИ [сьт’ шур:и´ы] творог? *Тăпăрчă вăл – çăмарта шурри пекех, ăна сĕт шурри теççĕ.* Творог – как белок яйца, его называют *сĕт шурри*. *Вишневский 1920* [Ашм11:323].

СИ[4] [си´]. *Симĕс çĕлĕк си çĕлĕк, сирĕн сие юратать. Хĕрлĕ çĕлĕк – тил çĕлĕк, хĕр сăрие юратать.* Зеленая шапка – *си* шапка, любит вас. Красная шапка – лисья шапка, любит девичье пиво. *Альшеево* [Ашм11:125].

СИВ КАЙĂК [си´в’ ка́йък] хищная птица? *Уй варĕнче ват йоман, пор сив кайăк он çинче.* Посреди поля старый дуб, все *сив кайăк* на нем. *Якейкино* [Ашм11:128].

СИЙ[2] [си´j]. *Юманĕнчен уйăрсассăн юманĕсем юлчĕç сий сайралса, хунавĕсем юлчĕç хумханса.* Когда разъединили с дубом, дубы остались *сий* редкими, поросль – в волнении✍. *Неверкино* [Ашм11:125].

СИККУККИ [сик:ук':и´]. *Сиккуккисем Симен-тăр, урапи тукунĕ тимĕр-тăр. Сиккукки,* наверное, *Симен,* обод колеса, наверное, из железа✍. *Стюхино* [Ашм11:139].

СИКТЕРМЕЛЛИ ЮРĂ [сик'т'эр'м'эл':и´ jýръ] веселая песня? *Сиктермелли юрăсене шав итленĕ ватăсем.* Старики без конца слушали *сиктермелли* песни✍. *Сказки и предания, с. 13* [Ашм11:139].

СИМ[2]**: СИМЛĔ** [си´м'л'ь] полезный, целебный. *Ун пек симлĕ япаласем çинчен* (о полезных средствах) *эпир виçĕм çулхи çулталăк кĕнекинче каласа парсаттăмăр.* О таких полезных средствах мы рассказали в календаре за позапрошлый год✍. *Календарь 1906.* Ср.: **сиплĕ** полезный, имеющий целебное свойство, здоровый [Ашм11:145, 152].

СИМЕН[1] [сим'э´н'] вред? [Ашм11:145].

СИМЕНЛĔ [сим'э´н'л'ь] вредный? *Тĕнчере усал сименлĕ япала пит нумай*. В мире очень много плохих *сименлĕ* вещей✍. Описка вместо **сиенлĕ** вредный? *Рукописный календарь. Прокоп.* [Ашм11:145].

СИМĔС КАЙĂК [си´м'ьс ка́jък] 1. название птицы, *букв.* зеленая птица, иволга? *Симĕс сата ларăттăм, симĕс кайăк пулăттăм.* Опустился бы на зеленый сад, превратился бы в *симĕс кайăк*✍. *Каменный Овраг.* 2. шпанская муха. *Симĕс кайăк – шпанская муха; ăна ясарлатакан кайăк теççĕ. Симĕс кайăк –* шпанская муха; ее называют насекомым, которое усиливает сексуальные чувства✍. *Средние Юмаши.* 3. *перен. Ай пуçана, пуç ыратать, симĕс кайăк пуçран сăхрĕ, чарсам, чарсам, ай, кайăкна.* О, свояк, голова болит, *симĕс кайăк* клюнул в голову, останови, останови, о, свою птицу✍. *Образцы* [Ашм11:147].

СИНЧЕ: СИНЧЕ ВАРКЕС [син'čэ´ варг'э´с] название гривы. Ошибка? *Мыслец* [Ашм11:150].

СИРĔМ [си´р'ьм']. *СПВВ* [Ашм11:154].

СИРĔП [си´р’ьп’] вред? *Сирĕп (айăп-чĕрĕп). Сирĕп* (вред)✍. *Старое Чекурское. Вун икĕ пуслăх мерчен сирĕпсĕр, пирĕн çамрăк пуçсем телейсĕр.* Жемчуг за двенадцать копеек без *сирĕп,* наши молодые головы несчастны✍. *Бюрганы* [Ашм11:155].

СИТ[3] [си´т’] в загадке о *копăста* – капусте. *Ялта ырă çын нумай та, пирĕн чунсем юратнине сит çитесси çук.* В деревне много добрых людей, и до любимых наших *сит* не дойдет✍. *Сит сителти, сителти, сич ял çинчен (çич ял çинчен?) сителти. Ямбулатово* [Ашм11:157].

СИТЕЛТИ [сид’эл’д’и´]. › **сит**[3] [Ашм11:157].

СЛЕВĔС [сл’э´в’ьс] бродяга? Знак вопроса в оригинале. Первоначальное значение – рысь (*çӳлевĕç*)? *Ядр.?* [Ашм11:329].

СОПЬЯХЛАН [соп’jахлáн] ходить без дела, попусту? *Мĕн сопьяхланса çӳрен çак, кирлĕ мар япалана пуçтарса.* Что же ходишь *сопьяхланса,* собирая ненужные вещи✍. *Средние Юмаши* [Ашм11:191].

СОРАМ[3] [сорáм]. Описка? *Лисокăнне сорам хыс вăрласа кайнă.* У Лизок *Сорам* украл свадебный кафтан✍ [Ашм11:194].

СОЯ КĂШКАР ВУТИ [соjá къшкáр вуди´ы] конский щавель? *Нижние Олгаши* [Ашм7:219].

СРАП: СРАП КĔПЕРРИ [срáп к’ьб’эр’:и´] радуга. *Срап кĕперри карнă (катаран карсан час полмасть пулĕ теççĕ çăмăр)*. Появился мост *срап* (если он далеко нависает, скорее дождя не будет)✍. *Чертаганы.* › **сĕвек кĕперри** радуга [Ашм11:332, 293].

СРЕК: СРЕК КĔПЕРРИ [ср’э´к’ к’ьб’эр’:и´] радуга. О радуге есть какая-то легенда, которая гласит, что если под радугой проехать на белом жеребенке, то что-то будет. *Якейкино.* › **сĕвек кĕперри** радуга [Ашм11:332, 293].

СТАН [стáн] откуда? *Стан çитет вăл? Стан* придет он?✍ *Старое Чекурское.* › **ăçтан, кăçтан**[1]**, çтан** откуда; как, каким образом [Ашм11:333; Ашм4:76–77; Ашм7: 192; Ашм13:118].

СТРАППЕЛЕ (?) [страп’:эл’э´] стропила. *Юркин.* Сомнительно [Ашм11:339].

СТУПКАЛĂ [ступкáлъ]. *Кăвак кăвакарçăн тĕкĕ – ступкалă тĕкĕ.* Перо сизого голубя – *ступкалă* перо✍. *Чебоксарский уезд?* [Ашм11:338].

СУ[3] [сý] нос? клюв? Не опечатка? *Хăвăн вăрăм суна мăй таран ман çăвара чиксе янă чух сан ухмах пуçна çыртса татса илменни сахал пулчĕ-и-мĕн-ха сана?* Когда ты свой длинный *су* засовывал в мой рот, мало, что ли, я терпел и не откусил твою глупую голову?✍ *Книга для чтения, с. 116* [Ашм11:159].

СУ[5] [сý]. *Хĕрĕх те пĕр су юмахи яр тесе калать тет тукмака.* И говорит волку, чтобы тот сорок и одну *су* сказку рассказал✍. *Кумакасы* [Ашм11:160].

СУЛАП [сулáп]. *Атăл çинчи шурă пулла сулап сыхларăм.* Белую волжскую рыбу я *сулап* сторожил✍. Ошибка? *Ау* 176[0], *Старое Чекурское* [Ашм11:173].

СУЛĂК[2]**: СУЛĂК ТЕНКИ** [сýлък т'эн'г'и´] серебряные монеты достоинством в пятьдесят копеек и рубль, пришиваемые на тухья по нижнему краю. *Тухья çине аялти хĕррине аллă пус тенки е тенкĕлĕх тенки çакаççĕ, вара çав ĕретри укçасене сулăк тенки теççĕ.* По нижнему краю тухья вешают пятидесятикопеечные и рублевые монеты и деньги в этом ряду называются деньги *сулăк*✍. *Карачево. Тухăя тӳпи силленет сулăк тенки çакмантан.* Венчик тухьи колышется, так как на нее не повесили деньги *сулăк*✍. *Тухья тӳпи силленет талĕр тенки çакмантан.* Венчик тухьи колышется, так как на нее не повесили деньги *талĕр*✍. *Черепаново* [Ашм11:175].

СУЛĂХ[2] [сýлъх]. *Сулăх кĕрӳ ларнă чухне пӳрнене çакнă.* Когда *сулăх* зять посиживал, повесили палец✍. *Старое Чекурское* [Ашм11:176].

СУЛĂШУ (?) [сулъжý] распределение?✍ < **сулăш** распределить, разложить. *Стюхино. СПВВ. Х* [Ашм11:176].

СУЛМАКА [сулмагá] то же, что **сулмак**[1] тяжесть; тяжелый? [Ашм11:177, 176].

СУПĔЯХ [суб'ьjáх] болтушка? *СПВВ.* Знак вопроса в оригинале. › **сопиях** *бран.* [Ашм11:190, 188].

СУПТУК [суптýк]. *Çакăнта çĕрле пулсан пĕр çын пычĕ тет те йĕр чарăннă тĕле çитсен суптук! терĕ тет те, алăк уçăлчĕ тет; вара çав çын кĕрсе карĕ тет çавăнта.* С наступлением ночи сюда подошел человек и там, где пропал след, произнес *суптук!* И дверь открылась; тогда человек вошел туда✍ [Ашм11:191].

СУРĂ [сӳ́ръ], **СОРĂ** [со́ръ] сила? сердечная боль? *Чĕре сурилĕх пăртак хыпрăм.* Немного съел ради *сури* сердца✍. *Раково. Чĕре сурилĕх пăртак çăкăр пар-ха.* Дай немного хлеба ради *сури* сердца✍. *Раково. Чĕре сури турăм.* Сделал *сури* сердца✍. *Раково. Чĕре сури* (*букв.* сердечная боль) боль в желудке от голода. *Чĕре сурилĕх* – это столько пищи, чтобы устранить острое ощущение боли от голода. Этому выражению противопола-гается *чĕре сыппи,* сердечная связь, т. е. здесь разумеется устранение этого острого ощущения посредством приема минимальной дозы пищи. *Чĕре сорри туса порнать çанта* (говорят про человека, живущего впроголодь). *Средние Юмаши. Чĕре сури (вайĕ?) илтĕм.* Чуточку успокоил голод, заморил червяка. *Трехбалтаево* [Ашм11:194].

СУСЛĂШ: СУСЛĂШНЕ КĂЛАРАÇÇĔ [суслъшн’э́ къларáç:ь] выматывает душу, выжимает соки? То же, что **тĕнкине (тинкине) кăлараççĕ** выматывают? *Средние Юмаши* [Ашм11:207; Ашм14:51–52].

СУТИР [суд’и́р’] в загадке о *кăвакал* – утке. *Сутир матки.* Жена *сутира*✍. *Собрание* [Ашм11:211].

СУТЛĂ [сӳ́тлъ] рассудительный (?) в поговорке. *Сутлă инке сут тăвать, ясар инке ял усрать. Сутлă* женщина судит, распутная женщина содержит деревню✍. *Федотов П.* [Ашм11:210].

СУТТĂМ [сӳ́т:ъм]. *И, кĕлет суттăм, кĕлет суттăм, кĕлет хыçĕнче тăрать-ĕçке.* И, клеть *суттăм,* клеть *суттăм,* стоит за клетью✍. *Чувашские песни* [Ашм11:212].

СУХРА [сүүрá] то же, что **сехре** страх, ужас? *Сухру уçăлсах кайĕ.* Как он даст тебе раза, так весь туман пройдет (очувствуешь-ся) [Ашм11:220, 103].

СУШНИТСА [сушн’итсá] расписной? < рус. искаженное слово. *Çӳлĕ тусем çинче курнитса, унăн чӳречисем сушнитса.* На высоких горах горница, ее окна *сушнитса*✍. *Большая Таяба* [Ашм11:220].

СӲМ: СӲМ-СӲМЕККИ [сүм’◡зүм’эк’:и́] *дет.* безымянный палец [Ашм11:222].

СӲПКЕЛЕН [сүп’к’эл’э́н’] болтать вздор? [Ашм11:224].

СӲРЕТ[3]**: СӲРЕТ КӖПЕРӖ** [сӳр’э´т’ к’ьб’э´р’ь] радуга. *Кратк. расск.* › **сӗвек кӗперри** радуга [Ашм11:227, 293].

СӲРХӲ [сӳр’ӳ’ӳ´] мрачный? Ср.: **сӳрхӳллӗ** мрачный [Ашм11:228].

СӲСЕЛ [сӳзэ´л’]. *СПВВ* [Ашм11:230].

СӲСЛЕН: СӲСЛЕН ЧАШĂККИ [сӳсл’э´н’ чажък’:и´]. *Разум.* [Ашм11:231].

Ç

ÇАВĂ[2] (?) [ḉавъ]. *Çавă çарри темĕскер. (Йĕрекен ачана ачашласа, пуçĕнчен шăлса тĕлĕнсе калат пысăк çын). Çавă çарри* что-то. (Плачущему ребенку говорит взрослый человек, поглаживая по голове)✍. *Средние Тимерсяны* [Ашм12:8].

ÇАВĂРНĂ [ḉавърнъ] косой (?) в заговоре. *Усал куç, хăмăр куç, чакăр куç, çавăрнă куç… тухса кайтăр.* Злой глаз, карий глаз, светлый глаз, *çавăрнă* глаз… пусть выйдут✍. *Новое Изамбаево* [Ашм12:23].

ÇАВĂШ [ḉавъш] радоваться, веселиться. Описка вместо **савăш** радоваться, веселиться? *Тăванпала тăван çавăшаççĕ, çичĕ ютсем пăхса тăраççĕ.* Родственники с родственниками *çавăшаççĕ,* чужие наблюдают✍. *Шаймурзино* [Ашм12:27; Ашм11:9].

ÇАНАТ[2] (?) [çанá т]. Описка вместо **çатан** плетень? *Чупăп тăкăна* (*та кăна*)*, чупăп – çитеймĕп, çанатăрсем (çатанăрсем?) йĕлме – аваймăп.* Буду бежать – не дойду, ваш *çанат* из ильма – не смогу погнуть✍. Искаженный текст. *Чувашские песни* [Ашм12:39, 69–70].

ÇАНСĂР [ḉанзър]. *Вара çав Эфеса пуçтарăннă çансăр пуху шавласа кăшкăрса пăлханса саланнă.* И тогда *çансăр* собрание, бывшее в Эфесе, разошлось в шуме, криках, волнении✍. *История православной* [Ашм12:39].

ÇАР[2] [ḉар]. *А-ах, майри ишер, ишер ишерех ути Макçăм çар ĕç, çар ĕçпе Макçăм çаран пуçĕнче пăркаланса утă çулать*. Искаженный текст. *Коракши* [Ашм12:57].

ÇАР[3] [ḉар] то же, что **çăвар** рот? *Çар калаçтармаççĕ.* Не *çăвара уçтармаççĕ*? Не позволяют говорить✍ [Ашм12:57, 315–317].

